Инв. № ~~2953~~. 3043
VI-237
3043



Тихăн Петĕркки

# ЁМĔТ

ЧАССР Государство Издательстви
ШУПАШКАР ◆ 1941

4 мая 1941 г.
Подпись А. Степанова

ТИХАН ПЕТĔРККИ

# Ĕ М Ĕ Т

*(3 пайлă драма)*

11
О.Т.К.

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР 1941

## ПЬЕСĂРИ ÇЫНСЕМ:

**Униçĕм**—чухăн, старик.
**Настаç**—Униçĕм хĕрĕ, чиперскер.
**Нетĕр Упи**—пĕччен çын.
**Энти**—чухăн каччă, кĕтÿçĕ.
**Урлав**—пуян, ватă старик.
**Çумкка**—Урлав ывăлĕ, вăй-питти çын.
**Тарье**—Çумкка арăмĕ.
**Сантăр**—Çумкка ывăлĕ, ухмахрахскер.
**Квас Хветĕрĕ**—староста.
**Пăркка**—евчĕ карчăк, юмăç.
**Халăх**.

## 1-МĔШ ПАЙĔ

Чухăн çын пÿрчĕ. Икĕ пĕчĕк чÿрече. Тĕпелти кĕтесре тайăлнă сĕтел. Сĕтел тĕлĕнче пĕчĕкçеççĕ хуралнă тураш. Тураш çумĕнче шывлă сÿленке (*крешенке шывĕ*). Пысăк кăмака çумĕнче лаххан. Лаххан тĕлĕнче пăрăсран витре çакнă. Вучахран ÿкекен вут çути сĕтел çине çитсе мĕкĕлтетет. Кăмака çумĕнче кашта. Ун çинче хутăрсем çакăнса тăраççĕ. Пÿртре сас-чĕвĕ çук чухне шăтăк витререн лаххана тумлакан шыв пăнклатни илтĕнет. Чаршав уçăлнă вăхăтра сак çинче Настаç кĕнчеле авăрласа ларать.

**Настаç** (*юрлать*):

Ан аваӑрла пӗтӗрсе
Турашӑлна пӗтерсе.
Ан йӗр, тантӑш, татӑлса,
Хура куçна пӗтерсе.

Аюх! Вучах сӳнмех пуçланӑ. Атте таврӑниччен паранкӑ пиçсе ӗлкӗреймӗ. (*Вутӑ пӑрахать. Вучахри вут çути хытӑрах ӳкет. Татах аваӑрлама тытӑнать. Юрлать.*)

Сикӗр, сикӗр шывалла та
Сикӗр, сикӗр шывалла
Шыв сирпӗнсе тӑмалла.
Ӳсӗр, ӳсӗр хӗр пулса та,
Ӳсӗр, ӳсӗр хӗр пулса
Çын тӗлӗнсе тӑмалла. (*Энти кӗрет.*)

**Энти.** Шӑпчӑксем вӗçсе килнӗ иккен!

**Настаç.** Мӗнле шӑпчӑк?

**Энти.** Кунта, эпӗ кӗнӗ чухне шӑпчӑк юрласа ларатчӗ пулас...

**Настаç.** Ухмантей! Мӗн, татах мӑшкӑлама килтӗн-им?

**Энти.** Эх, Настаç! (*Ун çумне ларать.*)

**Настаç.** Çуммах ан лар ӗнтӗ, Энти, атте килсе кӗрӗ...

**Энти.** Настаç! (*Ыталама тытӑнать, Настаç тӑрать.*)

**Настаç.** Ак, турахуп кучӗпе чышсан! Тупнӑ вырӑн вылямa.

**Энти.** Ну, чыш, чыш, хевтӳ çитеймест вӗт.

**Настаç.** Çитет!

**Энти.** Çитеймĕ! Ну? (*Пĕр-пĕрин куçĕнчен пăхса кулса яраççĕ.*) Аçу ăçта?

**Настаç.** Шакмаксем патне каяп тесеччĕ.

**Энти.** Настаç!..

**Настаç.** Мĕн? Кала тата. Ма сăмахна çăтрăн, пырна ларчим?

**Энти** (*хăяймасăр*). Хĕр тупса пар-ха мана.

**Настаç.** Сана авланма ир-ха, Энти.

**Энти.** Мĕншĕн?

**Настаç.** Вĕçен кайăк йăва çавăрмасăр нихăçан та чĕпĕ кăлармасть. Малтан кил-çурт çавăр.

**Энти.** Кил-çурт çавăрсан анчах авланас пулсан, нихăçан та авланас çук.

**Настаç.** Эс тăрăш, Энти.

**Энти.** Эх, Настаç, Настаç!.. Атте те кĕтӳ кĕтсех вилчĕ, ĕмĕтленнĕ ĕмĕтне кураймарĕ. Кĕтӳçĕ пушши алла лексен, унтан хăтăлма питĕ хĕн.

**Настаç.** Эс ĕмĕтлен. Ĕмĕтленмесен, тăрăшмасан, кам сан арку çине пурлăх пырса хурĕ?

**Энти.** Ак, эс мана качча пырсан — пĕрле ĕмĕтленĕттĕмĕрччĕ... Сирĕн патăрта пурăнăттăмăр. Кам пĕлет, пĕрле тăрăшсан, тен, çын çине те тухăттăмăр, Настаç. (*Калаçнă вăхăтра Энти Настаç çумнех пырса ларнă, аллине ун хулпуççи çине хунă. Сасă илтĕннĕ пек пулать. Настаç шартах сиксе Энти аллине ывăтать.*)

**Настаç.** Мĕн татах çулăхатăн?

**Энти.** Юрĕ, юрĕ, ан хирĕç, Настаç... Ырă каç пултăр! (*Тухса каять.*)

**Настаç** (*хыçĕнчен.*) Энти! Тухса кайрĕ. Эх, мĕншĕн çак Энти кĕтӳçĕре çӳреме çуралнă-ши? Лăпкă, ăшă чĕреллĕ ача. Тĕсĕ-пичĕ витĕр курăнса тăрать... (*Аса илсе.*) Ай, улăм кĕлти çыхма мансах кайнă. Каç пулса çитрĕ вĕт. (*Тумланать, вучахне вутă пăрахать те тухса каять. Униçĕм ерипен кĕрет, шăнса кӳтĕркенĕ. Вучах патне пырса аллине ăшăтать.*)

**Униçĕм** (*хăй пĕччен*). Карчăкпа старик пурăннă, тет. Вĕсем питĕ чухăн пулнă, тет, (*Салтăнать.*) Пӳрчĕ витĕр çил вĕрнĕ, тет, çапах та карчăкпа старик хурланман, тет. Вĕсен питĕ илемлĕ, мăкăнь чечекĕ пек хитре хĕрĕ пулнă, тет. Унăн пĕр пичĕ уйăх, тепĕр пичĕ хĕвел, куçĕсем сенкер пĕлĕт, çӳçĕсем хĕвел пайăрки пулнă, тет. Çавăн çине пăхса чунĕсене лăплантарнă тет ашшĕпе амăшĕ. Çак илемлĕ хĕр çинчен халăх шавĕ патша патне çитет, тет. Шухăшлать-шухăшлать те патша, кайса курать тет çав хĕре. Курать тет те — çавăнтах юратса пăрахать, тет... Илтетни, Настаç? Паян саншăн та çавăн пек савăнăçлă хыпар пур. (*Пăхкалать.*) Ха, килте никам та çук-çке. (*Лампа çутса ярать.*) Аçта тухса кайнă ку Настаç?

**Настаç** (*кĕрет*). Пит нумай çӳретĕн, атте. Паранкă тахçанах пиçнĕ, саланса та кайрĕ пуль ĕнтĕ.

**Униçĕм.** Пиçнĕ пулсан—çиййĕпĕр, хĕрĕм. Саланнă паранкă пит тутлă пулать вăл. Ну-кă,

хăпăл-хапăл антар-ха хуранна! (*Настаç хуранне антарса паранкă тиркине сĕтел çине лартать. Унисĕм сĕтелтен çăкăр каларса чĕлĕсем каскалать.*) Ух, паранкă шăрши тухрĕ. Шăрши питĕ ырă-çке. Пушă хырăмшăн паранкă—чи тутлă апат. Пĕр паранки—аш татăкĕ, тепри — усламçу, виççĕмĕш — кулачă, тăваттăмĕш—хăйма. Вăт епле эпир, улпут апачĕ çиетпĕр вĕт, э!

**Настаç.** Ман хăшне çиес-ши, атте, ашне-и, çуне-и?

**Унисĕм.** Эс усламçуне çи. Пăхсам, епле вăл сап-сарă! Эсĕ «улпут» хĕрĕ вĕт, сана çемçе апат кирлĕ.

**Настаç** (*кулса*). Çăкăр çине сарса çиес-и ку çăва, атте?

**Унисĕм.** Мĕншĕн çăкăр çине сармалла? Ăна чухăнсем анчах çăкăр çине сарса çиеççĕ. Тыт-та, пĕтĕм кумкипех çыртса çи. Çăкăрсăр çисен те шалкă мар!

**Настаç.** Хи-хи-хи! Эсĕ паян шӳт тума пит юрататăн, атте. Сан сăмахупа хутăш ку паранкă чăнахах та усламçу пекех туйăнать.

**Унисĕм.** Паян пĕр ырă хыпар илтрĕм, хĕрĕм.

**Настаç** (*ашшĕ çумне ларса*). Мĕнле хыпар-ши, атте?

**Унисĕм.** Шухăшламан, кĕтмен телей! Ылттăн улма хăех çăвара татăлса ӳкес, тет-ха.

**Настаç** (*савăнса*). Часрах кала, атте!

**Унисĕм.** Ан васкат, хĕрĕм.

**Настаç.** Мĕнле хыпар-ши?

**Унисĕм**. Шыраса туп. (*Кĕске пауза.*)

**Настаç.** Тупрăм, тупрăм!

**Унисĕм.** Ай, тем-çке, хĕрĕм. Тупайрăн-ши вара.

**Настаç**. Эсĕ: Шакмаксем патне каяп, терĕн вĕт-ха пасăр?

**Унисĕм.** Вара.

**Настаç**. Апла пулсан, вĕсем пире тырă кивçен пама пулнă.

**Унисĕм.** Çук, вăл мар.

**Настаç** (*салху*). Шакмаксем тырă памаççи кивçен?

**Унисĕм.** Çук.

**Настаç**. Епле пурăнăпăр, атте? Раштав анчах иртрĕ—çӳпçере çăнăх пĕрре пĕçермелĕх кăна.

**Унисĕм.** Антив, ан паччăр. Малашне эпир никамран та кивçен ыйтас çук.

**Настаç** (*уçăланса*). Нимĕн те ăнланмастăп. Мĕншĕн-ха эс хыпарна нумайччен пытарса тăратăн, атте?

**Унисĕм**. Вăхăт çитсен хăвах пĕлĕн. Ну, лайăхрах итле эппин. Шакмаксем патĕнчен таврăннă чухне Пăркка карчăк тĕл пулчĕ. Вăл пирĕн пата кĕçĕр пĕр çынпа евче килесси çинчен пĕлтерчĕ. (*Настаç салхуланать.*) Мĕн шарламастăн? Е начар каччă, чухăн каччă пулĕ тетне?

**Настаç.** Курăпăр.

**Унисĕм.** Мĕнле шухăшлатăн?

**Настаç**. Нимĕнле те шухăшламастăп! (*Сĕтел çинчен пухать.*)

**Унисĕм.** Вăт хĕр! Вăт ăна юрат. Эпĕ саншăн аçу та, аннÿ те—çавăнпа калассине тÿрех калатăп. Сан вырăнта тепри пулсан — савăнса каçса кайĕччĕ. Мĕнпур пирĕн иксĕмĕрĕн? Ман ĕмĕр çыншăн ĕçлесех иртрĕ. Маншăн нихăçан та хĕвел кулса çутатман. Пĕр эсĕ çеç савăнтарса пурăнтăн мана. Мĕнпур ĕмĕт сан çинче. Мĕнпур ĕмĕт—сана çын çине кăларса телейлĕ тăвасси. Ун чухне вилсен те юрать вара! (*Хурланать, куççулне шăлать.*)

**Настаç.** Атте, ан хурлан! Эпĕ çамрăк вĕт-ха...

**Унисĕм.** Сан сăмахусем, хĕрĕм, ман хыпарпа килĕшменнине кăтартаççĕ. Эпĕ саншăн тăрăшатăп вĕт... (*Пăлтăр алăкĕ сасси. Настаç шартах сикет, Нетĕр Упи кĕрет*).

**Настаç.** Кукка!

**Упа.** И-и, хăшин пысăкĕш пулнă эс, Настаç! Шурти шур хăва пек.

**Настаç.** Ан кул, кукка!

**Упа.** Кулса мар, Настаç, юратса. Ме, тыт кучченеç. (*Тутăр парать.*)

**Настаç** (*савăнăçлăн*). Кукка, хи-хи-хи! (*Тутăрне çыхса пĕчĕк куçкĕски витĕр пăхать.*)

**Упа** (*Унисĕме*). Эс мĕн, йысна, пуçна чиксе ларатăн?

**Унисĕм** (*вăрăм сывласа ярать*). Темĕскер вăйлаштăрах кайрĕ. (*Упапа Настаç ун çине хĕрхенсе пăхаççĕ.*)

**Упа.** Шухăшна ан пытар, йысна. Салт-ха шухăш енчĕкне, нушу-асапна пĕрле хисеплĕпĕр.

**Унисĕм.** Ватăлса ҫитетĕп, Упа. (*Вăрăммăн сывлать.*) Хампа пĕрле ĕмĕтсем те ватăлаҫҫĕ. Ĕмĕтсем ватăлнă майĕн пурăнăҫ пĕлĕчĕ хуралнăҫем хуралса тĕнчене хупласа килет...

**Настаҫ** (*чĕререн*). Атте! (*Упа ăна куҫпа пăхса чарать.*)

**Унисĕм.** Яв! (*Пуҫне ҫĕклет, каласса кĕтет. Унтан хăйне чĕннипе-чĕнменнине иккĕленсе малалла калать.*) Хам виличчен Настаҫа ҫын ҫине кăларса телейлĕ ҫын туса хăварасчĕ. (*Пауза.*) Паян... пурнăҫ ҫулĕ хуҫăлмалли кун! Кĕҫĕр... евчĕсем килмелле.

Упа. Йысна! Питĕ ир пулать-ҫке ку япала. Настаҫ ҫамрăк-ха! Выляса-кулса ҫӳрес чухне эсĕ ăна асапа чикес тетнем? Ҫамрăк вăхăт пĕрре анчах килет ĕмĕрте. Килет те вăл, сиссе те юлаймастăн, чĕкеҫ пек чĕвĕлтетет те вĕҫсе ҫухалать.

**Унисĕм.** Эс те, Упа, ман шухăша хирĕҫ иккен...

**Упа.** Ан та шухăшла вăл япала ҫинчен, Настаҫ.

**Унисĕм.** Малашне пурăнасси ҫинчен шухăшлас пулать, Упа. Пурлăхлă ҫынпа хăталлă пулсан, эпĕ те ватăлмалăх кунта тарăхса ҫăкăр татăкĕ шырамăттăм. Настаҫ хăй те чипер ĕҫсеҫиййĕччĕ, чипер тумланĕччĕ. Ачи-пăчисене курса савăнăттăм.

**Упа.** Калаҫма калаҫан та, пĕлтер, камсем евче яраҫҫĕ кĕҫĕр? (*Настаҫ ашшĕ ҫине тинкерсе пăхать.*)

**Унисĕм**. Пуян сынсем, Урлавсем!

**Упапа Настаç**. Урлавсем?

**Унисĕм**. Кун пек телей хăççан кĕтсе илмелле! Мĕн чухлĕ тара илнĕ çĕр, выльăх-чĕрлĕх, пилĕк лаша! Пĕртен-пĕр ывăлĕ анчах, мĕнпур пурлăхĕ Настаçа юлмалла вĕт!

**Настаç**. Çук, каймастăп çав тискере! Луччĕ ыйткалама тухса каям! Ăсĕ-пăсĕ пулсан—татахчĕ.

**Упа**. Питĕ йăнăшатăн, йысна. Урлав çемьи Настаçшăн юрăхлă мар. Улма йывăç папки çурхи хĕвелпе хăпарса çурăлать те, ырă чечек сарса тĕнчепе савăнать. Кĕтмен çĕртен ирхи сивĕ тăм килсе ӳкет те, пуçне чикет вара çав çеçке. Ачашлакан ăшă çил те, ыталакан хĕвел ури те чĕртеймест вара ăна ун хыçĕнчен. Настаç та Урлавсем патĕнче çавах пулмалла.

**Унисĕм**. Эс, Упа, малашнехи пурнăç çинчен шухăшла! Тырă çук! Сутма выльăх-чĕрлĕх çук. Çĕре Урлавсене виç çула тара панă. Хам, ватă шăмă-шакăпа аран сĕтĕрĕнсе е Урлавсем патĕнче, е Шакмаксем патĕнче ĕçлетĕп. Настаç та ют çыншăн ĕçлет. Ав, миçе хутăр авăрласа хунă, пурте çыннăн. Выçă пурăнма çук вĕт.

**Упа**. Настаç, кил-ха хам çумма. Миçере-ха эс?

**Настаç**. Эс, Кукка, пĕлетĕн вĕт.

**Упа**. Ну-ну, кала, миçере-ха эс. Антив, аçу илттĕр лайăхрах.

**Настаç**. Вунулттăра.

**Упа**. Илтетни, йысна?

**Унисĕм**. Çулсем çитнĕ ĕнтĕ.

Упа. Çитнĕ.. Ача-ха вăл! Итле, йысна. Эпĕ кам пулатăп, пĕлетне?

**Унисĕм.** Тытăнчĕ ĕнтĕ пакăлтатма!

**Упа.** Эпĕ Нетĕр Упи! Мана атте-анне, ывăл-хĕрсем яланах вилсе пынипе, Упа ят пана. Эпĕ халĕ аллă пиллĕкре. Эпĕ вăтăр пиллĕк çул улăхра халăх çаранне сыхласа пурăнна. Манăн çемье тавраш çук. Настаç маншăн — юратнă хĕрĕм. Эсĕ ăна ашшĕ пулса юрататăн, эпĕ куккăшĕ пулса юрататăп. Астуса тăр. Нетĕр Упи Настаçа нихăçан та асапа хăвармĕ. Ăнланатна, йысна, Нетĕр Упине? Нетĕр Упи выльăха та çапса хĕнесе курман. Нетĕр Упи этем урипе пусса минкетнĕ чечеке те ачашласа тӳрлетсе хăварать. Вăл усал кăмăллă, чул чĕреллĕ çын мар, анчах Нетĕр Упин чĕринчи юратуне тив-сен, вăл ун чухне хăйне кăтартĕ! (*Пăлтăр алăк сасси. Настаç куккăшĕ çумĕнче.*)

**Унисĕм.** Килеççĕ. Йĕркеллĕ пулăр эсир.

**Упа.** Сăмах пуçласанах кăларса ыватăтăп вĕсене.

**Унисĕм.** Ну! Кам кунта хуçа? Асту! Ура ярса пусаймăн ман киле ун чухне. (*Упапа Настаç шарламасăр, куç айĕнчен пăхса лараççĕ. Пăркkапа Çумкка кĕреççĕ.*)

**Пăркка.** Лайăх пурăнаççи? Ух, сивĕ те паян! Сăмса тăррине элле тăм илчĕ? (*Йăвалать.*)

**Çумкка.** Лайăх пурăнаççи?

**Унисĕм.** Килĕр, иртĕр, ларăр тĕпелелле.

**Пăркка.** Тараватлă хуçа пулсан, иртĕпĕр. Тараватсăр чĕнетĕн пулсан, алăк патĕнче тăрса

та калаçăпăр. Хĕнекентен тар, паракантан ил, теççĕ.

**Унисĕм.** Иртĕр, ырă çынсем! (*Çумккапа Пăркка лараççĕ.*) Питĕ сивĕтсе ячĕ эппин çанталăк?

**Çумкка.** Шартлама сивĕтсе ячĕ. Урам урлă çерçи вĕçсе каçаймасть.

**Пăркка** (*кашта çинчи хутăрсене курса*). Э-э, миçе хутăр авăрланă Настаç! (*Хутăрсене илсе пăхать.*) Пит çинçе авăрланă. Çумкка, пăх-ха, пасар çиппи пек!

**Çумкка.** Эпĕ хĕрарăм ĕçне пĕлместĕп. Маншăн те çинçе авăрласан аван, те хулăн авăрласан...

**Пăркка.** Эсир, арçынсем, мĕн пĕлетĕр. Сире тăхăнмалли анчах пултăр.

**Çумкка.** Кĕпе-йĕм тăвасси хĕрарăм ĕçĕ вăл.

**Пăркка.** Юрĕ, юрĕ ĕнтĕ. Унисĕм, эпир сирĕн патăра пĕр ĕçпе килсеттĕмĕр. Ял çинче, те тĕрĕс калаççĕ, те çук,—чăннине кунта пĕлĕпĕр, сирĕн тына пăру пур теççĕ, сутмастăр пулĕçке çавна?

**Унисĕм.** Сутма шухăшламанччĕ те, темĕн тăвас. Сутма та иртерех пулĕ тетпĕр, çамрăк-ха.

**Пăркка.** Çĕнĕ хуçа патĕнче ӳсĕ. Хуçисем кăмăллă çынсем, çиме-ĕçме çителĕклĕ.

**Унисĕм.** Темĕн тумалла ĕнтĕ. Питĕ шалкă. Илекенĕн алли... те çăмăл пулĕ? (*Настаç Упа хăлхинчен темĕскер каласа ларать.*)

**Упа.** Йысна, манăн тына тавраш çук та, ка-

лаçмалли те çук та, çапах сана пĕр ăс парасшăн. Ку ĕç çинчен каласма иртерех мар-ши?

**Пăркка.** Мĕн вара, çыннисем кăмăла каймасçĕ-и?

**Упа.** Çыннисем çинчен сăмах тапратса каласмасан та юрĕ. Каласма тытăнсан шăрпăкланакансем те пулĕç.

**Çумкка.** Сана, Упа, хутшăнмасан та юрамалла. Кунта кил хуçи пур. Унăн сансăр пуçнех ăсĕ çитнĕ. Пулла ишме вĕрентмеççĕ.

**Унисĕм.** Упа, эсĕ чăнахах та чĕнмесĕрех лар-ха. Эсĕ çынпа тӳрĕ калаçа пĕлместĕн. (*Упа чĕнмест.*)

**Пăркка.** Тимĕре хĕрнĕ чухне шакка теççĕ. Ман ăспа, кунта шухăшламалли те çук пек туйăнать, Унисĕм.

**Çумкка.** Эсĕ мана лайăх пĕлетĕн, Унисĕм. Сана нихăçан та пăшăрхантарман. Парăмсемшĕн хĕсмен. Кивçен илнисене пĕчĕккĕн ĕçлекелесех тататăн. Тепĕри пулнă пулсан, сана тахçанах суда панă пулĕччĕ, е çĕрне туртса илнĕ пулĕччĕ. Çĕршĕн сана эпĕ нихăçан та хĕсмен. Пĕр ят çĕрне хăвах виç çула тара патăн. Вăхăт çитсен—хăть татах тара пар, хăть хăвах ак.

**Унисĕм.** Вăл каламасăрах паллă ĕнтĕ, Çумкка. Çын вырăнне хунăшăн тавтапуç. Анчах пирĕн хĕр сире килĕшсех кайĕ-ши? Пирĕн, чухăнăн, мĕн пур? Япала та туса çитереймен-ха. Сире пурлăхлă хĕр кирлĕ. (*Çак вăхăтра Пăркка Настаçа калаçтарать.*)

**Çумкка.** Пурлăх çинчен каласмасăрах килĕшĕпĕр, Унисĕм. Сывлăхĕсем пулсан, япалисем пулĕç. Хулăншăн туртăнса тăмăпăр.

**Унисĕм.** Эпĕ калаçсах тăрас çук, Çумкка. Хăй мĕнле шухăшлать.

**Пăркка.** Мĕн шухăшласа тăмалла тата? Каç тăвас япалана ире ан хăвар, теççĕ. Тата кам кирлĕ сана, Настаç? Начар киле калаçтармаççĕ вĕт сана.

**Настаç.** Манăн халĕ качча каяс шухăш çук, Пăркка аппа.

**Пăркка.** Мĕн эс, ватта юлас тетне? Сана, хăвăр пурăнăçăра кура, кам калаçтармалла тата! Кĕтмен, шухăшламан телей хăй тĕллĕн татăлса ÿкет, çавна та тыта пĕлместĕн.

**Настаç.** Мана кирлĕ мар вăл телей. Антив, ыттисене пултăр. Каймастăп—сăмах та пĕтнĕ.

**Çумкка.** Асту, Унисĕм, малашнехи çинчен шухăшласа пăх.

**Упа.** Шухăшламалли те, калаçмалли те çук. Хирĕç сăмах кăмăлăра каймасан—тухăр та кайăр.

**Çумкка.** Унисĕм!

**Унисĕм.** Чарăн, Упа! Эс те, Настаç, сăмах ан хуш урăх. Кам кунта хуçа? Ытла ирĕке тухрăн? Аçу мĕн шухăшлать—çавă пулĕ. Калаçнă—татăлнă. Мĕн кирлĕ тата пире?! Юрĕ! Килĕшĕпĕр, Çумкка! Хĕр тавраш çапла вăл. Пăркаланать-пăркаланать те, кайран хăех тав тăвать.

**Настаç.** Атте!.. (*Йĕрет.*)

**Упа** (*тăрать, çиленнĕ куççемпе пăхса илет*), Эпĕ сывă чухне ку ĕç пулаймĕ! Хăпăр вырăнтан, тĕрĕс-тĕкел чухне! Кайран ўкĕнмелле ан пултăр. (*Çумккапа Пăркка хăраса тăраççĕ.*)

**Унисĕм** (*уткаласа çўрет*). Упа! Упа! Кам кунта хуçа? Кам кунта Настаç ашшĕ? Кам? Çумкка! Пăркка! Эпĕ хам сăмаха хам хуçа. Пĕрре каланине улăштарас çук.

**Упа** (*Çумккапа Пăркка çине пăхса*). Ну?! (*Лешсем тухса шăваççĕ. Настаç выртса йĕрет.*)

**Унисĕм**. Яв?! Мĕн турăн эс, Упа? Мĕн турăн?! Ял çинче хĕр ятне яратăн! Эсĕ пире пĕтерсе нуша шăтăкне чикесшĕн. Яв?! Тухса кай! Ура ярса ан пус урăх!.. Сан тĕсне курнă ан пултăр урăх! (*Пĕр вырăнта тĕпĕртетет*).

**Упа**. Ташла, ташла, йысна. Ташланăшăн кам пилĕк пус укçа парĕ?! Хытăрах хăпарт çилĕ хăмпине, çурăлса кайми?

**Унисĕм**. Эс тата мăшкăлама тытăнтăн-и, швелтрун, çунтарнă тунката!

**Упа**. Йысна, шухăшласа пăх-ха авантарах. Кама качча паратăн хĕрне? Каччи ырă çын пулсан, татахчĕ. Миçе яла, миçе хĕр патне çитмен ĕнтĕ вĕсем. Этемми юрăхлă пулсан, чухăн хĕрĕ патне ура та ярса пусас çук вĕсем. Çав усала качча парса Настаç пуçне ан çи, йысна. Тĕсĕ-пичĕ çук, ăсĕ катăк, ĕçет юрăхсăр.

**Настаç**. Пуçăм пĕттĕр луччĕ, ăна качча кайиччен, (*Йĕрет.*)

**Унисĕм**. Ан йĕр-ха эс. Эпĕ саншăн вĕт, сана

юратниие... Сана телейлӗ тӑвасшӑн тӑрӑшап. Юрӗ. Ху кӑмӑлна кайнӑ пек ту. Упа кукку та, ав, сан майлӑ. Анчах... Ҫумкка пире куншӑн хытӑ тавӑрмасӑр каҫарас ҫук.

**Упа.** Парӑмусем мӗн чухлӗ сан?

**Униҫӗм.** Нумай. Куланай тӳлемешкӗн пӗлтӗр 10 тенкӗ укҫа илнӗччӗ, 20 пӑт тырӑ...

**Настаҫ** (*кӑмӑлне хытарса*). Апла та, капла та пӗтмелле. Юрӗ, эппин. Кайса кала. Килӗшӗр!

**Упа.** Настаҫ! Чарӑн, ан ухмахлан. Кукку сывӑ чухне ирӗкрен памӗ ку ӗҫе тума. Йысна! Манӑн ҫемье те, кил-ҫурт та ҫук. Ватӑлмалӑх кунта кил-ҫурт лартма ӗмӗтленнӗччӗ эпӗ. Кӑшт сыхласа пухнӑ укҫам пур. Ытла хӗсе пуҫласан—кайса тӳлӗн.

**Настаҫ.** Кукка! (*Тав тӑвакан куҫпа пӑхать, куҫҫуль юхать.*)

**Униҫӗм.** Упа, ху мӗнле пурӑнӑн?

**Упа.** Улӑх сыхлама пӑрахас тетӗп, ҫигӗ. 35 ҫул хушшинче сыхласа кил-ҫурт тӑваймарӑм, ҫын пек ҫемьеллӗ пулаймарӑм. Пӗр шанчӑк, пӗр ӗмӗт пур ман. Ӗҫ тухсан—пурсӑмӑр та телейлӗ пулӑпӑр. Ӗҫ тухмасан вара хулана ӗҫ-леме кайӑп, е ялтах тимӗрҫ ӗҫне тытӑнмалла пулӗ.

**Униҫӗм.** Тен эпир те ырӑ кунсем курӑпӑр, Упа! Яв? Настаҫ, илтетне? Чӗрем лӑпланма пуҫларӗ-ха... Эс, хӗрӗм, ан кулян. Эпир те ырӑ кунсем курӑпӑр-ха тен, яв?

(Настаҫ вырӑн сарать.)

**Упа.** Çăва тухсан пĕр ĕçе тытăнса пăхăпăр, йысна.

**Униçĕм.** Мĕнле ĕçе?

**Упа.** Ылттăн шырăпăр!

**Униçĕм.** Ылттăн? Кам çухатнă вара ăна пирĕншĕн?

**Упа.** Пухтелĕнчи Уксах Витяна пĕлеттĕнччи эсĕ?

**Униçĕм.** Куркаланă ĕлĕк чух.

**Упа** *(выртса)*. Вăт çав Уксах Витя патне эпĕ час-часах кĕркелеттĕм. Пĕлтĕр вăл вилес умĕн мана пĕр ĕç çинчен каласа хăварчĕ. Урине машинăпа таттарсан вăл Хăят больницинче выртнă. Унпа пĕрле пĕр старик пулнă. Çав старик хăй вилес умĕн Витяна çапла каласа хăварчĕ тет. „Эпир вуниккĕнччĕ. Вуниккĕрен эпĕ юлашки, ыттисем пурте вилсе пĕтрĕç. Эпир Айкăрлă варĕнче пытанса пурăнаттăмăр. Икĕ вар пĕрлешнĕ сăмсахра пысăк юман ларатчĕ, юман çумĕнче çăл, çăл çумĕнче пирĕн çемленкке пурччĕ. Çав çемленккере пирĕн пит нумай ылттăн юлчĕ. Сывлăху пулсан, шыраса туп çавна. Вара пире асăнса турра кĕлту",— тесе каласа хăварчĕ тет. Витя суякан этем марччĕ. Тăрăшса шырасан, тен тупăпăр çав ылттăна.

**Униçĕм.** Чăнах та çаплах пулнă-ши?

**Упа.** Вăрă-хурахсем ĕлĕк питĕ нумай пулнă.

**Униçĕм.** Ман атте пит нумай калаçатчĕ вĕсем çинчен. Пулнă пулĕ, пулман мар ĕнтĕ.

**Настаç** *(хутшăнса)*. Халлапри пек калаçа-

тăр эсир. (*Выртать. Чĕнмеççĕ. Униçĕм лампă çутине пусарать. Вырăнĕ çине ларать.*)

**Униçĕм.** Тупасчĕ, тупасчĕ çав ылттăна! Килçурт çавăрăттăм. Лаша илĕттĕм. Ĕне илĕттĕм. Сурăхсем ĕрчетĕттĕм. Ун чухне, Настаç, кăмăлна кайвă çынна киле кӳртĕпĕр. Эпĕ вăтă мар вĕт-ха ытлашши? Упа, эпĕ санран 5 çул анчах аслăрах вĕт. Эсĕ аллă пиллĕкре, эпĕ— утмăлта. Эпĕ начар çимĕç пирки анчах аптăракаласа пурăнатăп. Ун чухне!..

Улма сачĕ ĕрчетсе ярăттăм. Çӳрĕттĕм вара садра тĕрмĕшсе. Ав, Курмишка кашни çул панулми çиет. Сăпасра пĕтĕм ял ун улмине сутăн илет. Пире хамăра çиме çитсен те аван пулĕччĕ. Эпир хытса пурăнмăттăмăр-ха. Садра уткаласа çӳрĕттĕм... Настаç ачисене юратса курасчĕ. „Асатте" ятне илтсе вилесчĕ. „Асатте, хăш улма тутлăрах?" „Ак ку, ачам, пит тутли. Пăх-ха, епле хитре вăл! Пăх-ха, епле вăл хĕп-хĕрлĕ пиçнĕ!" „Асатте, чăнахах та тутлă, иккен!" „Тутлă, тутлă, ачам. Ак, тыт арку çине, тыт!.." Настаç, Упа! Чĕнмеççĕ. Çывăрса кайрĕç пулас. Эх, ĕмĕт, ĕмĕт! Хăçан та пулин савăнтарса курăн-ши эс мана?! (*Выртать.*)

ЧАРШАВ.

## 2-МĔШ ПАЙĔ

### Пĕрремĕш картина

Урлав пӳрчĕ. Пуян пӳрт ăш-чикки. Урлав, Çумкка, Квас Хветĕрĕ, Тарье. Сĕтел тулли çимĕç. Саптăр сентĕре çинчен пăхса выртать.

**Хветĕр.** Эс, Çумкка, ахалех ман ӳкĕте кĕместĕн. Асăнăн-ха Квас Хветĕрĕн сăмахне.

**Çумкка.** Мĕне юрăхлă вара çав Тарăнвар?

**Урлав.** Ил, Çумкка, ил Тарăнвара, Лайăх-и, начар-и, çапах та çĕр вăл.

**Çумкка.** Пĕлнĕ-пĕлмен сăмаха ан хутшăн, атте. Мĕн ăнланатăн эс кучухнехи пурăнăçра? Çĕр те, çĕр. Мĕн, Тарăнварăнне тăмне çыртса кышламалла-им? Тырă акма юрăхлă çĕр пулсан, татахчĕ.

**Хветĕр.** Эс ăна-кăна ан пăх, Çумкка. Тарăнвар акма юрăхлă çĕр пулмасан та, унтан утă çулса илме май пур. Унăн курăкĕ те ик-виç çултан хакне тавăрать. Пуринчен ытла Тарăнвар таврашĕнчи çĕрсене крепит туса отруба тухса ларма аван. Ялтан инçе мар. Сад ĕрчетес тесен те унтан лайăх вырăн тупас çук. Эй, мĕн каласмалли пур ĕнтĕ.

**Урлав.** Пире çĕр тăрантарса пурăннă. Çĕр вăл пирĕн пурлăх, пирĕн вăй.

**Сантăр** (*сентĕре çинчен*). Ан ил, ан ил, атте, Тарăнвара. Тарăнварта шуйттансем нумай.

**Çумкка** (*Сантăра*). Эс çăварна чар! (*Квас Хветĕрне.*) Кăмăл туртмасть ман Тарăнвар еннелле. Çĕр вăл алăра пит шанчăклă тăмасть. Паян санăн, ыран ăна халăх сухалать. Мантăрим, тăватăмçул Киштек улпучĕн çĕрĕпе мĕн хăтланчĕç?

**Хветĕр.** Эй, мĕн хăраса тăмалли пур. Патша çарĕ вăйлă-ха, тĕнче тĕрĕс-тĕкелтен нихăçан та тапранас çук.

**Çумкка.** Э-э, эс ăнланмастăн пуранăçа. Мантăн-им, Киштек улпутне тустарнă чухне хамăр ялти халăх пуянсем çине епле пăхма пуçларĕ? Çĕр вăл укçа енчĕкĕ мар, кĕсъене кĕмест.

**Урлав.** Ан шиклен, Çумкка. Турă çырнă саманана этем вăйĕ улăштарас çук. Халăх вăл çĕкленет те, лăпланать.

**Çумкка.** Самана улăшăнасса хам та шанмастăп эпĕ, анчах хресчен вĕт вăл кăшт пăлханнă вăхăтра та тӳрех çĕр çине тирĕнет.

**Урлав.** Çапах та, çав çĕре алăран ан тарт, Çумкка.

**Çумкка.** Эс чĕнмесĕрех лар, атте.

**Тарье.** Ан харкашăр-ха ĕнтĕ. Çийĕр мĕн лартнине. Курма лартман, çиме лартнă. Хветĕр кум, тыт-ха çак хур тукмакне, çи-ха!

**Сантăр** (*сентĕре çинчен*). Анне, мана та пар-ха пĕр тукмакне.

**Тарье.** Ан та—çи! (*Сантăр анать.*) Çи-ха, çи, Хветĕр кум.

**Хветĕр.** Эп ахаль те пăхса лармастăп, Тарье кума. Сантăр, кил-ха, хам çумма лар. Ух, мĕн пысăккăш пулнă эсĕ!

**Сантăр.** Татах ӳсеп-ха эпĕ. Ун чухне аттене мана хĕненĕшĕн хăйне тиверткелĕп. Хи-хи-хик.

**Çумкка.** Ну, çăварна ан кар! (*Квас Хветĕрпе эрех ĕçеççĕ, Сантăр хăй ярса ĕçет. Çумкка ун çине çиленсе пăхать.*)

**Хветĕр.** Антив, ĕçтĕр. Вăй-питти çынна пĕр черкке мĕн вăл.

**Çумкка.** Ман шухăшпа ялта халĕ вут армане лартас пулать. Çил арманĕсем тыра авăртса ĕлкĕреймеççĕ. Çил арманĕ мĕн вăл? Çил пур— авăрать, çил çук—çунатне усса ларать. Çу çаптаракан савăт тумалла. Пирĕн халăх кантăр-йĕтĕн акмасăр пурăнаймасть, ĕмĕр-ĕмĕрех килте тĕртсе тунă кĕпе-йĕмпе çӳрет. Çăм таптаракан машина лартмалла. Халăх аптăраса çитнипе 20—30 çухрăма кайса çӳрет. Акă ăçта тăрать мул çăлĕ!

**Урлав.** Татах аташса кайрĕ ĕнтĕ. Сан укçу нумай пуль çав, тĕккелет пуль. Пĕрре те шел мар сана укçа!

**Хветĕр** (*кулса*). Ав мĕн шухăшланă эс, Çумкка. Пултарайăн-ши? Эс, мĕн, машина таврашне ăнланса илме çăмăл тетнем?

**Çумкка.** Машина таврашне пĕлекенсем хăйсемех тупăнаççĕ вĕсем. Атя, пая кĕрсе тытăнар, Хветĕр кум?

**Хветĕр.** Хе-хе-хе, темĕн тăвас ĕнтĕ. Мулкач хӳри анчах пулмĕ-ши вăл? Шанчăклă япала мар пек туйăнать мана ку ĕç. Шухăшласа пăхăп-ха... Çавăн пирки чĕнтертĕн-им эс мана?

**Çумкка.** Çук, ун пирки мар. (*Сантăр тепĕр черкке тултарнине курса.*) Эй!..

**Тарье.** Сана эпир, Хветĕр кум, пĕр ĕç тĕлĕшĕпе чĕнсеттĕмĕр. Эпир, ак, çак услапа ниепле те авлантараймастпăр-ха. (*Сантăр çине кăтартать*).

**Хветĕр.** Хе-хе-хе, çавтери пурлăх çинче те хĕр тупаймастăр-и ĕнтĕ?

**Çумкка.** Ачи çын свĕрлĕ мар вĕт. Çынран та намăс. Ăçта кăна çитсе пăхман. Уксах-чăлах илес килмест.

**Тарье.** Тем мурла çуралса ÿсрĕ. Ăс хуранĕ катăкрах пулчĕ çав ун.

**Сантăр.** Сан хăвăн катăк, анне. Икĕ хут иккĕ тăваттă миçе? Пĕлместĕн, хи-хи-хик!

**Çумкка** (*çиленсе*). Ну?! Ан чĕннĕ пултăр!

**Хветĕр.** Мĕнле пулăшу пама пултарăп-ши эп ку ĕçре?

**Çумкка.** Эпĕ Униçĕме чĕнме ярсаттăм. Эсĕ, Хветĕр, ял старăсти. Кăшт хытăрах хĕссен, вăл хĕрне паратех.

**Тарье.** Чухăн çын хĕрĕ те ĕнтĕ, пырĕ. Тĕсрен-питрен, сывлăхран аван. Ĕçчен, ал-ура ĕçне те питĕ пултарать, теççĕ.

**Çумкка.** Пĕркун евче кайсан хăй килĕшнĕччĕ те ĕнтĕ. Анчах, Нетĕр Упи ĕçе пăсса пăрахрĕ.

**Хветĕр.** Мĕн ĕçлет кунта Нетĕр Упи? Улăхран мĕн тума килнĕ вăл? Эпĕ ăна!..

**Çумкка.** Улăх сыхлама пăрахасшăн, тет.

**Хветĕр.** А-а, апла пулсан...

**Тарье.** Йăлăхтарчĕ пуль ĕнтĕ улăхра. Пĕтĕм ĕмĕрне тискер кайăк пек пĕччен пурăнăçпа иртерчĕ вĕт.

**Хветĕр.** Эпир тытăнсан, Униçĕмне нумай каластармăпăр-ха ăна та... Мĕнле, Сантăр авланас килет-и?

**Сантăр.** Шутсăр авланас килет, хи-хи-хик! (*Пăркка кĕрет.*)

**Тарье.** Ав, Пăркка та çитрĕ.

**Çумкка.** Унисĕм килмест-им?

**Пăркка.** Халех, халех кĕрет...

**Çумкка.** Ну, мĕнле ĕçсем?

**Пăркка.** Э-э, анăш та тăвăш килĕнче. Настаçĕ яхăн та ямасть. Нетĕр Упийĕ çисе ярас пек пăхать. Упа ятне ахалех паман иккен. Тĕнчери ырă этем хăйĕн ачи-пăчине нихăçан та Упа ятне ан патăр. (*Унисĕм кĕрет.*) Ак, Унисĕм те çитрĕ.

**Унисĕм.** Ырă пурăнаççи?

**Çумкка.** Турă пулăшнипе чиперех пурăнатпăр-ха. Кил-ха, ирт кунталла. Сăкманна хыв, Унисĕм. (*Çак вăхăтра Тарье Сантăра тепĕр пÿртне хăвалать. Леш каясшăн мар, анчах Тарье ăна ирĕксĕрех тĕртсе кÿртет.*)

**Унисĕм.** Юрĕ, салтăнмасан та. Эпĕ нумай ларса тăрас çук. Темĕн тума чĕннĕ ĕнтĕ эсир мана?

**Тарье.** Салтăн, салтăн ĕнтĕ, Унисĕм. (*Унисĕм сăкманне хывмасăр тăрать.*) Ак, сĕтел хушшине лар-ха, хăна пул.

**Пăркка.** Эс мĕн тата, Унисĕм, йăлăнтаран? Сана ялти хисеплĕ çынсем хăнана чĕнеççĕ, эсĕ, хăна кура мар, пуçна пĕкĕрен çÿлĕ çĕкленĕ. Ыгла та мăнкăмăлланса кайнă-çке, чăнах, хăйне кура мар.

**Хветĕр.** Салтăн, Унисĕм. Сана салтăнма староста хушать. Староста сăмахĕнчен иртме пултараймастăн.

**Унисĕм.** Юрĕ эппин, ырă кăмăлпа чĕннĕ пул-

сан... (*Салтăнать.*) Хисеплĕ этемсемпе юна-шар ларма та тивĕçлĕ мар та эпир...

**Çумкка.** Ун çинчен калаçмалăх та çук. Пур-сăмăра та пĕр турă туса янă. Ак, кунта лар-ха, Унисĕм. Эсĕ, Пăркка, Хветĕр çумнерех лар. (*Урлав тепĕр пӳрте тухать.*)

**Тарье.** Ăçта тухан эс, пăяхам, хăнасем пур çинче?

**Урлав.** Çан-çурăм лаштăрах кайрĕ, выртса канас-ха.

**Тарье.** Çийĕр-ха, çийĕр. Курма лартман, çиме лартнă. Эс, Пăркка, хăвах тыт, вăтанса ан тăр. Ак, Унисĕм, хур тукмакне тыт-ха. Ав, унта пулă пур. Çумкка, ахаль ан лар ĕнтĕ, ĕçтер. (*Çумкка ĕçтерет.*)

**Унисĕм.** Ăша пĕтĕмпех каскаласа кайрĕ. Тавтапуç ырă суннăшăн.

**Çумкка** (*тепре ĕçтерет.*) Кил-ха, Унисĕм, тепре тыт-ха.

**Унисĕм.** Ытла та нумай пулать-çке, хăвăр ĕçĕр-ха.

**Çумкка.** Эпир нумай ĕçрĕмĕр ĕнтĕ. Сан пи-ре хăваласа çитес пулать-ха малтан.

**Унисĕм** (*ĕçет*). Ĕçес эппин, ырă сунатăр пулсан.

**Тарье.** Эс, Унисĕм, хур тукмакне тыт-ха. Ĕçнĕ хыççăн апат анать вăл.

**Хветĕр.** Çи, çи, Унисĕм, тăраничченех çи; сана староста хушать. Хăçан-ха эс старостапа пĕрле ларса хăна пулмалаччĕ?!

**Унисĕм.** Эй, мĕн каламалла ĕнтĕ. (*Хĕрĕн-*

*кĕллĕ.*) Тавтапуç ырă суннăшăн, çын выранне хунăшăн, тавтапуç.

**Хветĕр**. Сан, Унисĕм, малалла та пирĕнпе çăкăр-тăварлă пуранма май пур. Эсĕ пиртен ан пăран. (*Çурамĕнчен çупăрлать.*) Сана çав Нетĕр Упи нумай пăсать. Эс унпа ахалех çыхланса пуранатăн. Вăл патша çинчен ырă мар шухăш сарать, теççĕ.

**Унисĕм** (*çиме пăрахса*). Çук, Хветĕр. Упа ун пек калаçнине илтмен эпĕ. Апла калаçса çÿреме тура ан хуштăр ĕнтĕ.

**Хветĕр**. Ан суй, Унисĕм! Упана эпĕ лайăх пĕлетĕп. Вăл час лекмелли этем. Унпăн тимĕр сăнчăр хатĕрленĕ ĕнтĕ, унпа пĕрле сана та...

**Унисĕм.** Ах, тура! Хветĕр, эсĕ ахалех хăратса калаçатăн.

**Хветĕр.** Юрĕ, юрĕ, ан хăра, Унисĕм. Малашне пĕрле пуранма тивĕçлĕ этемпе ун çинчен калаçмăпăр ĕнтĕ. Санпалан пирĕн хурăнташланас шухăш пур. Çумкка мана анне урлă туртăм тивет, эсĕ ăна пĕлетĕн. Çумккан пĕртен-пĕр ывăлне авлантарса эпир Настаç урлă санпа хăталлă пуласшăн.

**Çумкка.** Эй, Унисĕм, кутăнланса ан тăр ĕнтĕ. Тыт-ха, ак, тепĕр черкке.

**Пăркка.** Тата мĕн кирлĕ ĕнтĕ сана, Унисĕм?!

**Унисĕм** (*ĕçмест*). Тавтапуç. Çитрĕ ĕнтĕ, Çумкка. Ĕçрĕм, çирĕм, мăй таранах.

**Çумкка.** Мĕн шухăшлан, Унисĕм?

**Унисĕм.** Настаç яхăнне те ямасть. Эпĕ ун пуранăçне пăсса ун куççульне курса пуранма

хал çитерес çук. Хăй кама каяс тет, çавна кайтăр? Пуяна каять-и, кĕтӳçе-и—хăйĕн ĕçĕ.

**Тарье.** Эс, Униçĕм, пире çын вырăнне те хумастна? Тепри пулсан чĕркуçленсе ларса пуççапĕччĕ. Ытла пуçна çĕкленĕ-çке. Настаç çын чĕлхи çинче тăман пулсан, татахчĕ.

**Пăркка.** Вара, вара. Эс, ватсупнăскер, тĕпсакайĕнче пурăнатна? Вăл сăмахсемпе, вăл шавлупа Настаç çине кам пăхĕ? Ăна кам хĕр тесе хисеплет?

**Униçĕм** (*иксе тăрать.*) Мĕн, мĕн терĕн эс? Епле сан чĕлхӳ çаврăнать, ял тухатмăшĕ, çылăхсăр хĕр çинчен хура юнлă чĕлхӳпе сӳпĕлтетме! Тавтапуç, Çумкка, хăна тунăшăн. (*Тумланать.*)

**Хветĕр.** Ăçта каян, лар!

**Униçĕм.** Тавтапуç! Сирĕн хăналăх, ак, мăй таранах... Тавтапуç.

**Çумкка.** Юлашки хут ыйтатăп, паратни хĕрне?

**Униçĕм.** Çук!

**Çумкка.** Униçĕм, асту!

**Хветĕр.** Упашăн та, саншăн та сăнчăр хатĕр.

**Униçĕм.** Мейĕр, çийĕр, сăнчăрлăр, хура çăхансем! Ак, тармастăп. Сирĕн мĕнпур ĕçĕр те çыннăн юнне ĕçесси анчах. Çитĕ-ха сирĕншĕн те вăхăт, шалçăрсем тулĕç-ха!

**Хветĕр.** Е?! Хăратма тата пире?! Эс кампа калаçнине туятна? Ак сана! (*Çапса ӳкерет.*)

**Çумкка.** Хăратма, навус! (*Униçĕме хĕнеççĕ.*)

**Пăркка.** Хытăрах, хытăрах, аяк пĕрчине савăр!

**Урлав** *(тепĕр пӳртрен тухса).* Хветĕр, Çумкка, мĕн хăтланатăр эсир, вĕлерсе пăрахатăр вĕт çынна! Çумкка, чарăнăр, тархасшăн! (*Чарасшăн.*)

**Çумкка.** Ан çулăх, атте! (*Тĕртсе ярать. Унисĕме алăкран сĕтĕрсе тухаççĕ.*)

**Пăркка.** Эй, турăçăм, çылăхне пирĕн çинчен сирсе яр. (*Сăхсăхать.*)

**Тарье.** Эй, турă, хăвах куран вĕт; айăпĕ пирĕн çинче мар. (*Сăхсăхать.*)

**Урлав** (*тенкел çине ларса*). Ахалех çын чунĕ пĕтет!

ЧАРШАВ.

## Иккĕмĕш картина

Унисĕм пӳрчĕ. Вăрах çĕр. Пӳртĕнче Настаç, Упа. Настаç кĕнчеле авăрлать, Упа çăпата тирет. Пăлтăрта автан авăтса ярать.

**Упа.** Е-е, нумай вăхăт иккен, пирвайхи автансем авăтса ячĕç. Сирĕн автанăн сасси питĕ лайăх вара.

**Настаç.** Автанĕ аван та çав, çитерме тыра çук. Чăхсене çăва кăларсан, çăмарта сутса та пулин чей-сахăр илмелĕх укçа тăваттăм та...

**Упа.** Кăларăпăр-ха майĕпе. Улăхри пӳрт тĕп сакайĕнче паранка хуппи нумай юлсаччĕ, çавна илсе килĕпĕр... (*Автан тепре авăтать.*)

**Настаç.** Атте питĕ нумай тăрать-çке. Мĕн пулнă-ши? (*Хăранă тĕс.*)

**Упа.** Мĕн пулмалла, таврăнĕ-ха.

**Настаç.** Çанталăкĕ пит сивĕ тăрать, тумтирĕ çӳхе — шăнса пăсăласран хăратăп. Кĕçĕр ахаль те çил-тăман асар-писер вăйлă.

**Упа.** Инçе çула кайман вĕт. Урлавсем патĕнчен çитиччен сивĕ илес çук. (*Чĕнмесĕр ĕçлессĕ.*)

**Настаç.** Кукка! Эс чăнах та ылттăн тупасса шанатна?

**Упа.** Çук, Настаç. Аçуна йăпатас тесе çеç каларăм эпĕ. Ылттăн çинчен мар, урăххи çинчен ĕмĕтленес пулать пирĕн. Ылттăнсăрах телейлĕ пурнăç тăвасси çинчен ĕмĕтленес пулать.

**Настаç.** Мĕнле тумалла-ши çав телейлĕ пурнăçа?

**Упа.** Курăпăр-ха, малалли кунсем хăйсемех кăтартĕç. Эс çамрăк-ха, Настаç, пĕлейместĕнха ун çинчен. .

(Настаç кĕнчеле авăрлама пăрахса темĕскер итлет. Пӳртре шăпах, тулта çил сасси.)

**Настаç.** Кукка, эс илтетне?

**Упа.** Мĕн?

**Настаç.** Те çил улать, те этем йынăшать.

**Упа.** Çил улать пулĕ. (*Шавламасăр ĕçлессĕ.*)

**Настаç.** Кичем капла ларма. Халлап яр-ха кукка.

**Упа.** Пĕр карчăкпа старик пурăннă, тет. Вĕсем шăмат пасарне кайма тухнă, тет. Кăнна кĕперĕ çине çитсен лаши чарăнать тет те хӳрине çĕклет, тет. (*Упа чарăнса шавламасăр ĕçлет.*)

**Настаç.** Малалла?

**Упа.** Тарать, тет-ха.

**Настаç.** Эс, кукка, алхасса анчах юмах яратăн. Айта луччĕ тупмалли юмах ярар.

**Упа.** Эс шыраса та тупас çук вĕт.

**Настаç.** Курăпăр, кам хăвăртрах тупĕ. Кала.

**Упа.** Пĕр пĕркенчĕк айĕнче тăвата хĕр йĕрет.

**Настаç.** Сĕтел, хи-хи-хи! Халĕ эсĕ туп. Пӳрт тăрринче çур çăкăр.

**Упа** (*шӳт туса*). Мĕн-ши вăл?

**Настаç.** Пĕлмест, çавна та пĕлмест, аля-ли! Кама сутас-ха сана?! Лӳпинке карчăка сутас-ха. (*Кулать.*)

**Упа.** Ватă вăл пит, аран-аран йăраланса çӳрет.

**Настаç.** Лӳпинкене, Лӳпинкене! Саншăн вăл чăн-чăн юрăхлă хĕр. (*Тупса.*) Уйăх пулать вăл.

**Упа.** Э-э, чăнах та-çке. Нукка шыраса туп: Ши турĕ, пи турĕ, çӳле кайрĕ—маття турĕ.

**Настаç** (*шухăшласа ларнă хыççăн*). Пĕлместĕп.

**Упа.** Апла тăк, халех качча паратăп сана.

**Настаç.** Тектĕр-ха, тектĕр. Çăмарта.

**Упа.** Çук. Вуннăччен сăватăп. Пĕрре, иккĕ, виççĕ...

**Настаç.** Çăлтăр!

**Упа.** Мар. Тăваттă, пиллĕк, улттă, çиччĕ...

**Настаç.** Улма!

**Упа.** Саккăр, тăххăр, (*кĕтет*) вуннă! Тупаймарăн. Ну, халь ĕнтĕ суккăр Савуçа сутатăп сана. Хăмла пулать вăл. Çавна та тупаймарăн.

**Настаç.** Хи-хи-хи, эсĕ, те чăвашла, те тутарла каларан. „Ши турĕ, пи турĕ, çӳле кайрĕ

маття турӗ". Нимӗн йăпанмалли те çук! (*Чĕнмест, тăнлать.*)

**Упа.** Атăл урлă çип çапнă. (*Настаç чĕнмест.*) Мĕн салхулантăн, Настаç?

**Настаç.** Тахăшĕ пăлтăр алăкне уçса хупрĕ. (*Пăлтăрта йынăшни илтĕнет. Упапа Настаç алăк патне чупаççĕ, алăка уçаççĕ. Алăкран Униçĕм кĕрсе ӳкет. Юнланнă.*) Атте, мĕн пулчĕ?!

**Упа.** Йысна, камсем сана? (*Сак çине вырттараççĕ.*)

**Униçĕм.** Урлавсем патĕнче... Çумккапа Хветĕр...

**Упа.** У-у, ирсĕрсем!.. Каларăм сана ан кай тесе! Хвершăл патне чупам-ха часрах!

**Униçĕм.** Кирлĕ мар... Манăн тӳрленесси иртрĕ пулмалла. Тархасшăн часрах пуп патне чупсам, Упа.

**Упа.** Пуп мар, хвершăл кирлĕ халь сана.

**Униçĕм.** Тархасшăн, Упа. Юлашки сăмаха итле... Çын пек вилесчĕ...

**Упа.** Юрĕ... (*Тумланать.*) Эх, вăхăт çитсен эп вĕсене!.. Ан йĕр, Настаç. (*Тухса каять.*)

**Униçĕм.** Ан йĕр-ха, хĕрĕм. Ман ахаль те вилес кунсем çитсе пыратчĕç ĕнтĕ. Нумай-нумай пĕр-ик çул пурăннă пулăттăм. Эпĕ вилсен сире Упапа пурăнма çăмăлтарах пулĕ, пĕр çăвар чакĕ.

**Настаç.** Атте, тархасшăн ун пек калаçса чĕрене ан çур. Епле те пулин чĕрĕлес пулать сан.

**Униçĕм.** Çук ĕнтĕ, Настаç, пулмасть пуль.

Мĕншĕн сана суяс ман. Вилĕм—çывхарсах килет. Вăл манран инçе мар ĕнтĕ. Эпĕ унăн уттине те илтетĕп, ав... ай!.. (*Аташать.*) Ав, вăл çĕре чĕтретсе килет, тиек йăмринчен те çўлĕ! Епле вĕри сывлăшпа явăнса килет вăл. Епле унтан вĕри çапать, туятна, Настаç?! Эс, вилĕм, Настаçа ан пĕçер. Ах, вĕри... Шыв пулсан, пĕр тумлам анчах шыв пулсан!..

**Настаç** (*шыв парать*). Ак, атте, кăшт шыв сып-ха.

**Унисĕм** (*ĕçет, ăна кĕрет*). Настаç, эсĕ кунта-и? Эпĕ сана çухатсаттăм. Лар-ха, хам çумма, кўр-ха аллуна кунта. Ак çапла.. (*Чĕнмеççĕ.*) Пуянсене, тăшмансене ан парăн. Ху чĕрў хушнă пек пурăн, луччĕ кĕтўçе качча кай, анчах чĕрўне хирĕç ан пыр. Эпĕ, ват супнăскер, хĕсĕрлеме тытăннине каçар, хĕрĕм. Ав, Энти... аван ача... Ай... Татах вĕри çапа пуçларĕ. Настаç, кил хам çумма... (*Чĕнмеççĕ. Унисĕм куçне хупнă.*)

**Настаç**. Атте! Чĕнмест. Сывлать хăй. Ырлăха пулсан, юрĕччĕ. Çывăрса кайрĕ-ши? (*Йĕрет. Чўречерен шакканă сасă илтĕнет.*)

**Сасă**. Настаç, тух-ха пĕр саманта!

**Унисĕм**. Кам шаккать?

**Настаç**. Улька сасси пек. Темĕскерпĕн пўрте кĕмест?

**Унисĕм**. Чĕнет пулсан, тухса кĕр, хĕрĕм. Кирлĕ пулĕ... Пўрте кĕменни луччĕ аван, мана курсан, тем, хăраса ўкĕ.

**Настаç**. Çўреççĕ çурçĕр варринче çапкалан-

са. Кӑнтӑрла вӑхӑт пулман пек. (*Тухса каять. Пӗр самант сасӑ ҫук.*)

**Униҫӗм.** Кирлӗшӗн килнӗ пулӗ, кирлӗшӗн... кирлӗшӗн... (*Аташма тытӑнать.*) Кирлӗ... Мӗн кирлӗ мар? Пурте кирлӗ! Упапа мана ылттӑн кирлӗ. Акӑ, ҫӑва тухсан пӗр лав ылттӑн тиесе килетпӗр. Ун чухне эс, Настаҫ, хӑмаҫ кӗпе, пурҫӑн явлӑк, кӗмӗл тевет ҫакса ҫӳрӗн. Туя кайма тухъя пулӗ, арӑм пулсан чӑнкӑр-чӑнкӑр хушпу пулӗ... Настаҫ, Настаҫ, ӑҫта эс? Мӗншӗн чӗнместӗн? (*Чӳречерен шаккаҫӗ: „Униҫӗм пичче, Униҫӗм пичче, хӗрне вӑрласа кайрӗҫ!“ Униҫӗм сиксе тӑрать.*) Мӗн? Вӑрларӗҫ! Кам вӑрларӗ? (*Астуса илсе.*) А-а, Урлавсем! (*Урай варрине утса ҫитет.*) Ҫӑхансем!.. Настаҫ, хӗрӗм! Пӗтрӗн! Упа! Ӑҫта эс? Энти, ӑҫта эс? Чупӑр, ҫиҫӗм пек хӑвалӑр! Туртса илӗр ман хӗре кашкӑрсенчен! Эп те сирӗн хыҫӑртан чупатӑп! Ҫитӗр, ҫитӗр хӑваласа! Малалла!.. Ах, Настаҫ, хӗрӗм!.. (*Урай варрине кайса ӳкет. Ҫилпелен чӳрече хуппи вӗҫерӗнсе кайса шартлатса хупӑнать те, чӳрече куҫӗ саланса тухса ӳкет. Ҫӗмрӗк куҫ витӗр ҫил улать, пӳрте юр парӑлтатса кӗрет.*)

ЧАРШАВ.

## 3-МӖШ ПАЙӖ

### Пӗрремӗш картина

Урлавӑн малти пӳрчӗ. Ҫу вӑхӑчӗ. Каҫ пулать. Пысӑк чӳрече витӗр шурти йӑмрасем курӑнаҫҫӗ. Урамра сурӑх кӗтӗвӗ, ӗнесем иртни илтӗнет. Ачасем кӑшкӑрашнӑ сасӑ. Настаҫ чӳречерен пӑхать.

**Настаç**. Кунсем иртеççĕ... Çак кил-çурта килни çур çул та çук-ха, çапах та виçĕ ĕмĕр иртнĕ пек туйăнать. Хăçан вĕçĕ пулĕ-ши?..

**Тарье** (*тепĕр пӳртĕнчен*). Кин, кин, ăçта кайса çухалтăн! Тух, сурăхсене картана хуп! Кунта хăнана килмен вĕт эсĕ.

**Настаç**. Çиччас, пăянам. Ах, чунăм, нихăçан та йĕркеллĕ ларса канас çук. (*Тухса каять.*)

**Тарье** (*кĕрет, чей куркисем илсе-кĕрсе шкапа лартать*). Илтĕмĕр ыратман пуçа тимĕр туклак. Тепĕри пулсан, çак кил-çуртра савăнса ташласа çӳрĕччĕ, вăл нимĕн чĕнмесĕр, сăмсине тăсса çӳрет.

**Урлав** (*туяланса утса кĕрет*). Эс, кин, ахалех вăрçан ăна. Настаç шух çын мар, мĕн тума юрласа, ташласа çӳретĕр вăл? Çамрăк вăхăтра ытла ĕçлеттерсе çĕмĕрес марччĕ, ĕçлес кунĕсем малалла-ха унăн.

**Тарье**. Эс, пăяхам, пăрах кин хутне кĕме. Этем çамрăк чухне ĕçлемесен, хăçан ĕçлемелле тата. Эпир ăна картинка вырăнне курма илмен вĕт.

**Урлав**. Настаç ахаль те нумай ĕçлет. Настаç килнĕренпе эпĕ те таса кĕпе-йĕм тăхăна пуçларăм.

**Тарье**. Е-е, эс çавăнпа ун хутне кĕретĕн иккен-ха.

**Урлав**. Ара, чăн сăмахăн суйи çук.

**Тарье**. Сан чĕнмесĕр ларсан та юрамалла.

**Урлав**. Юрĕ, юрĕ, кин, урăх чĕнмĕп ĕнтĕ, хăвăр мĕн тăвассине тăвăр. Эпĕ çынтан тухса ӳкнĕ ĕнтĕ. Маншăн канăçлăх вырăн—масар.

**Тарье.** Тахçанах вилсе выртсан та шалкă мар.

**Урлав.** Сирĕншĕн çĕрĕ-çĕрĕпе тăрăшнине мантăр çав ĕнтĕ. Камшăн пурлăх турăм, камшăн çĕр пухрăм?

**Тарье.** Пухнă—юрĕ. Халĕ эпир пурлăх тăватпăр. Сан ĕмĕрÿ иртнĕ, çавăнпа та сан калаçмали те çук. Пурлăха эпир Çумккапа пухрăмăр, эсĕ пуçласа яраканĕ анчах пулнă. Ял пуянĕ ятне Çумкка ĕçе тытăнсан тин илтрĕмĕр.

**Урлав.** Юрĕ, юрĕ, кин, турă каçартăр, мана кÿрентернĕшĕн.

**Тарье.** Ан лăкăртат. Лар сухална усса. (*Тухса каять.*)

**Урлав.** Çак куна юлассине пĕлнĕ пулсан, хам та çĕмĕрлес çукчĕ, çынна та йĕртес çукчĕ. Эй, турăçăм, каçар мана иртнĕ çылăхсемшĕн...

**Настаç** (*кĕрет*). Асатте, сана валли кĕçĕр ампара шăналăк карса вырăн сартăм. Унта сывлăш та уçă, шăнасем те çук.

**Урлав.** Тавтапуç, Настаç. Эс анчах çак килте мана çын вырăнне хурса ырă сунакан. Эс анчах ман чуна йăпатакан... Аçу мĕнле пурăнать-ха?

**Настаç.** Сывалать ĕнтĕ. Ура çине тăракан пулнă.

**Урлав.** Эс, Настаç, килтисем вăрçнине ан пăх, аçу патне час-часах çÿре. Кала эс ăна, сывалсан пирĕн пата çÿремесĕр ан тăтăр.

**Настаç.** Вăл кунта нихăçан та ура ярса пусас çук.

**Урлав.** Ахалех çынна хĕнесе пăрахрĕç... Эс

Настаç, ан хуйхăр. Пит ан куляп. Эпĕ пумаях пуранас çук ĕнтĕ. Вилес умĕн сана ылттăн пиллесе хăварăп.

**Настаç.** Мĕн тăвăп эпĕ ылттăнпа?

**Урлав.** Ухмах, ылттăн вăл пурăнăç парать. Хăшпĕр этемшĕн ылттăн вăл тăванĕнчен те хаклă.

**Настаç.** Маншăн ку кил-çуртра ылттăн мар, тем парсан та савăнăç çук.

**Урлав.** Ак, тата, тепĕр ухмах. Саншăн пурăнăç тин пуçланать-ха.

**Тарье** (*тепĕр пӳртрен*). Кин, кин, мĕн тăван унта! Шыв ăсса кĕр-ха. (*Настаç тухать.*)

**Урлав** (*пĕчченех*). Çапла çав, этем тени— пĕри пуянлăхран тарать, тепĕри пуянлăхшăн хăйĕн пуçне хурать, çын чунне те шеллемест; пĕри пуянлăхĕпе ырă курать, тепĕри мулне хĕрхенсе ĕмĕр хытнă çăкăр çисе пурăнать. Акă, хамах эпĕ... Камшăн тăрăшрăм? Ачамсем валли пурлăх хăварасшăн тăрăшрăм. Пуян ятне илтессишĕн тăрăшрăм. Ак халĕ... Эх-хе-хей... Этем çемьере вăйпитти вăхăтĕнче анчах хисеплĕ çав, вăйран тухса ӳксен çĕтĕк çăпата вырăнне анчах вăл. Ку инкеке пĕлнĕ пулсан, вут чĕртсе çунтарса ямалла пулнă иккен пĕтĕм пурлăха.

(Çумкка кĕрет.)

**Çумкка** (*пӳлĕмĕнчен укçа арчи илсе тухса сĕтел çине лартать.*) Нетĕр Упи пĕтĕмпех пĕтерсе хучĕ.

**Урлав.** Мĕн тата?

**Çумкка.** Унисĕм хăта пирки суда панă.

**Урлав.** Каларăм вĕт сире. Ахалех çыхлантăр этеме. Ырăпа чĕннĕ—ырăпа кăларса ямаллаччĕ.

**Çумкка.** Ухмах! Ял кахалĕсен çăварне вăхăтĕнче чармасан, вĕсем ĕнсе çинех сиксе лараççĕ.

**Урлав.** Ырă ятлă пулса пурăннă вăхăтра суд тăрăх сĕтĕрĕнсе çӳреме намăс.

**Çумкка.** Суд тăрăх çӳресси—ытти-хытти, ак, укçа ахалех сая каять-ха.

**Урлав.** Мĕнле укçа?

**Çумкка.** Судья ĕçе путармашкăн 100 тенкĕ ыйтать.

**Урлав.** 100 тенкĕ! 100 тенкĕ икĕ ĕне вĕт вăл.

**Çумкка.** Унтан кая яхăнне те ямасть. 100 тенкĕ памасан, Çĕпĕр кĕтет сана, тет.

**Урлав.** Нетĕр Упин çăварне вăхăтра хупламаллаччĕ çав. Ăна тытса кайсан та шалкă мар. Хветĕр мĕн ĕçлет?

**Çумкка.** Пуш хăмпă вăл Хветĕр. Нетĕр Упи майлисем кăшт юнанă та, сехри хăпсах тухнă. Каяс-ха часрах, нумай кĕттерсен судья çиленĕ тата.

**Урлав.** Киле чĕнсе килмеллеччĕ.

**Çумкка.** Килмест, мошенник. (*Тухса каять.*)

**Урлав** (*пĕччен*). 100 тенкĕ, Я?! Вăтанмасть те вĕт çавăн чухлĕ укçа ыйтма. Ну-и судья! (*Тухса каять.*)

**Сантăр** (*кĕрет*). Настаç! Ăçта Настаç? (*Настаç кĕрет.*)

**Настаç.** Кунтах-ха эпĕ.

**Сантăр.** Ăçта çухалса çӳретĕн?

**Настаç.** Леш пӳртре сăмавар чĕртеттĕмччĕçке.

**Сантăр.** Эп кам саншăн, улăшка-и, упăшка мар-и?

**Настаç.** Упăшка.

**Сантăр.** Сан мĕн тумаллаччĕ-ха эп килсен? Мĕн тумаллаччĕ-ха? (*Шухăшлать.*) А... хыв атта! (*Настаç аттине хывать.*) Татах чӳречерен пăхрăн-и?

**Настаç.** Пăхрăм. Чӳречене пăхма тунăтăр ăна.

**Сантăр.** Урăх ан пăх. Иртен-çӳрен куçăхтарĕ. Итлемесен, чĕн пушă тытăп та, çунтарса илĕп лайăхрах кăна, хи-хи-хик. Ох, паян турă лашана хĕнерĕм те! Чăхăмлама пăхать, шуйттан пуçĕ. Ниепле те плуга туртмасть. Эп ăна çапап—вăл тапать, эпĕ ăна, вăл тапать. Чĕпчĕрĕ юн кăлариччен вĕтрĕм. Асту, эп сан упăшку вĕт. Хи-хи-хик!.. (*Çыпçăнать.*)

**Настаç.** Ан çыпçăн!

**Сантăр.** Чуптутар-ха пĕрре.

**Настаç.** Кай. Пăяхам курсан аван мар.

**Сантăр.** Антив, куртăр, хи-хи-хик. (*Ыталасшăн.*)

**Настаç.** Кай, кай, путсĕр! (*Сантăра тĕксе ярать.*)

**Сантăр.** А-а, эсĕ те турă лаша пек чăхăмлатни-ха! Чим-ха эп сана! Пушă илсе кĕрем-ха! (*Хăвăрт тухса каять.*)

**Настаç** (*пĕччен*). Эх, турăçăм! Епле ĕмĕр ирттермелле çак ухмахпа. Епле ун мăшкăлне

тӳссе пурӑнмалла? Пӗтрӗ мӗскӗн пуҫӑм. Сая кайрӗ ҫамрӑк ӗмӗрӗм... Тӗрмене хупнӑ пек килсе хупрӗҫ. Лаша вырӑнне ӗҫлетӗн, йытӑ вырӑнне пурӑнатӑн. (*Ларать те хуллен макӑрать.*) Эх, Энти, асӑнатӑн-ши халь эс мана, хӗрхенетӗн-ши? Ирӗкре чух сана юратса савӑнма пӗлмерӗм...

**Сантӑр** (*тепӗр пӳртре шавлать*). Анне, анне, пӗр чӑххине ҫием ӗнтӗ! Ман суха туса вӑй пӗтрӗ... Настаҫ тӗксе ярать мана.

**Тарье сасси**. Ҫӳҫрен ярса ил эс ӑна, ҫӳҫрен!..

**Настаҫ**. Ав, епле ӑса вӗрентеҫҫӗ ухмаха.

(Пӑрккапа Тарье кӗреҫҫӗ.)

**Тарье**. Кин, ӗҫӳ пӗтрим сан? Тух, ӗнесене суса кӗр. (*Настаҫ тухать.*) Пӗрмаях тӗксӗм пӗлӗт пек ҫӳрет. Килнӗренпе ҫур ҫул ҫитет ӗнтӗ, пӗрре кулса пӑхман-ха. Сантӑр ҫине ҫаврӑнса та пӑхмасть.

**Пӑркка**. Ара, ҫав, эп каланӑ пек ту-ха. Ун пек тусан ҫавӑрнатех вӑл. Ҫыварнӑ чухне пуҫӗ йӗри-тавра виҫӗ хут ҫавӑр та минтерӗ ӑшне чик. Тата тепӗр эмел пур та ман, анчах вӑл пит хаклӑ тӑракан япала.

**Тарье**. Усси пулсан, хакӗшӗн тӑмӑпӑр-ҫке.

**Пӑркка**. Пӗр кӗпепе явлӑк парӑн эппин вара.

**Тарье**. Усси пулсан — икӗ кӗпе те шел мар.

**Пӑркка** (*хӗвӗнчен курӑк тымарӗ кӑларса*). Акӑ. Ҫак курӑк вӑл тӗнчере сайра-сайра ҫеҫ ӳсет. Эпӗ ӑна пӗлтӗр Турулӑхран ҫимӗк каҫ кӑларса килсеттӗм. Ҫав курӑк тымарӗ йӗкӗр-

ленсе ӳсет. Икӗ йӗкӗреш тымар пӗр-пӗринпе ыталашса ӳсеççӗ. Пӗри — арçын тымар, тепӗри — арăм тымар... Пыр-ха, чӗнсе кил-ха кунта Сантăра.

**Тарье.** Тавтапуç ӗнтӗ сана, Пăркка. (*Алăк уçса тепӗр пӳртелле кăшкăрать.*) Сантăр! Ăçта çӗр шăтăкне кайса кӗчӗ çав. Сантăр! Кӗр-ха кунта! (*Сантăр кӗрет.*) Сана Пăркка аппу пӗр сăмах калас тет. (*Хăй тухса каять.*)

**Пăркка.** Сантăр, кил-ха, хам çумма лар-ха, ачам. (*Сантăр ларать.*) Ну, мӗнле пурăнатăр Настаçпа? Юрататьи вăл сана?

**Сантăр.** Вăл мана питӗ юрататъ, ман атта урапан хывать. Анчах вăл чӳречерен ялан пăхать. Эпӗ ăна хӗнеп-ха. Хи-хи-хик...

**Пăркка.** Арăма ăна хӗнесех тăрас пулать. Хӗнесен ăслă пулать вăл, упăшкине те хытăрах юрататъ. Сантăр, эсӗ ак çак тымарпа Настаçа вăл çывăрма выртсан, кашни каçах кӗпинчен турт; вара вăл сана тата хытăрах юратакан пулӗ.

**Сантăр.** Ак çапла-и? (*Пăркка кӗпине çаклатать.*)

**Пăркка.** Чху, чху, чху! Мӗн хăтланан эс, Сантăр?! Эс Настаçа çаклатса турт, мана мар. Эпӗ ватăлнă ӗнтӗ. Çамрăкрах пулсан... Чху, чху, чху!...

**Сантăр.** Чху, чху, чху... (*Ахăлтатса кулать.*)

**Пăркка.** Асту, Сантăр, ан ман, вара, эп каланине. Чышкупа хытăрах ӗçле эсӗ. (*Тухать.*)

**Сантăр.** Çук, манмастăп. Эп халех!.. Настаç! (*Пауза.*) Настаç! Ăçта кайса çухалчĕ çав, мур пуçĕ. Настаç! (*Настаç кĕрет.*) Халех çывăрма вырт!

**Настаç.** Ан ухмахлан, кам халех çывăрать?

**Сантăр.** Аха! Эс татах итлеместни-ха мана?! (*Настаçа çавăрса тытать те хĕнеме тăрать.*)

**Настаç** (*çăлăнса тарать*). Ан çыпăç, ухмах! Пĕрре çапсанах — çакăнатăп та вилетĕп.

**Сантăр.** А, вилеймĕн! Çакăнса вилсен сана шуйттансем утланса çӳреççĕ. (*Настаç патне ахăлтатса, виртлесе пырать, ăна çӳçрен тытма хăтланать. Çав вăхăтра Урлав кĕрет.*)

**Урлав.** Сантăр! Мĕн хăтланан эсĕ? Чарăн!

**Сантăр** (*аслашшĕнчен хăраса чарăнать.*) Ма вăл итлемест мана? Ма çывăрма выртмасть?

**Урлав.** Выртĕ-ха, çывăрас вăхăт çитсен.

**Тарье сасси.** Сантăр! Аçу чĕнет. Выртма каймалла, тет. Тух часрах!

**Урлав.** Ав, аннӳ кăшкăрать. Выртма каймалла, тет. Тух, аçу кĕрсе пушăпа вĕтме пуçличчен.

**Сантăр** (*Пăркка панă курăк тымарне кăтартса*). Тектĕр-ха, Настаç, çак тымарпа çаклатса туртсан, тек тараймăн манран. (*Тухса каять.*)

**Настаç** (*йĕрсе ларать*). Çакăнса вилес пулать луччĕ, çак мăшкăла тӳсиччен. Пур-пĕрех пурăнăç пĕтнĕ ман.

**Урлав.** И-ий, ачам, пуриншĕн те çакăнса ви-

лес пулсан — тĕнчере пăяв та çитес çук. Тӳсес пулать турă хăвна мĕн çырнине. Халь сан пурнас кунусем малалла-ха, ачам. Мĕншĕн пит кулянас? Пурнăçра ырри те, усалли те, пурте пулать. Ан хуйхăр, Настаç. Ав, каç та пулчĕ. Выртса çывăр та, каçхи хуйхă ирччен иртсе каять вăл. Э, ырă каç пултăр... (*Тухса каять.*)

**Настаç** (*çаплах кулянать, куççулĕ çаплах юхать, вăл ăна шăла-шăла илет*). Каçхи хуйхă ирччен иртсе каять... Анчах... ирхине татах çĕнĕрен пуçланать. Эх, турăçăм, ăçта кайса пуçа чикмелле!

Пысăк чӳречесенчен уйăх çути ӳкет, йăмра мĕлкисем курăнаççĕ. Настаç чӳрече умне ларса ăна уçса ярать. Урамра Энти юрлани илтĕнет.

*Энти юрри*:

Аслă улăх тулли ешĕл çаран,
Ешĕл çаран тулли кăвак чечек,
Çав чечек пек санăн куçусем.

Атăл тăвĕ çинче хура вăрман,
Хура вăрман тавра кĕмĕл кăлкан,
Çав кăлкан пек санăн çӳçӳсем.

**Настаç.** Энти сасси... Савнă Энти... Юрла, Энти, юрла!.. Юлашки хут илтсе юлам санăн сассуна.

*Энти юрри*:

Сад пахчийĕ тулли чие çырли,
Мĕнле çырла пур-ши унтан хĕрли?
Çав çырла пек санăн тутусем.

Сăр вăрманĕ тулли йăштай йывăç,
Пуринчен те йăштай — шурă хурăн,
Çав хурăн пек йăштай эс, савни.

Хăвалăхра тĕрлĕ кайăк сасси,
Пуринчен те хитри шăпчăк сасси,
Шăпчăк сасси пекех сан сассу.

**Настаç** (*чӳрече умне туртăнса*). Энти!.. Ма чарăнтăн! Юрла, чунăм, юрла, ман юратнă шăпчăкăм. Ах, Энти, эс илтместĕн ман сасса! Эс пĕлместĕн эп саншăн мĕнле хыпса çуннине. Арăм пулчĕ те, мана манчĕ, тетĕн пулĕ. Çук, Энти, эп арăм мар, эп ĕлĕкхи пекех таса та айăпсăр... Хăтар мана ухмах упăшка çылăха кĕртиччен. Эс килсе чĕнсенех, эп сан хыççăн çунатланса вĕçсе пырăттăм. (*Салхуллăн.*) Çук. Килмест вăл кунта... Никама та кирлĕ мар эпĕ. (*Пӳлĕм тавра чупса çӳрет, кантăра тупрĕ.*) Асапланса пурăниччен... (*Чĕтрекен аллисемпе кантăрине йăлă тума тытăнать, çав вăхăтра чӳречерен Энти пăхать.*)

**Энти.** Настаç!..

**Настаç** (*шартах сикрĕ, кантрине çурăм хыçне пытарчĕ*). Ах!.. (*Çĕре кукленсе ларать.*)

**Энти** (*чӳречерен кĕрет*). Эс мĕн хăтланатăн? Çакăнса вилесшĕн-им? Ухмах! (*Кантрине туртса илсе ывăтса ярать, Настаçа çĕклесе сак çине лартать.*)

**Настаç.** Ан чар, Энти, кай кунтан. Ман пурăнăç пур-пĕрех пĕтнĕ ĕнтĕ.

**Энти.** Пăрах ку киле. Айта аçу патне. Эс

мĕнле асапланса пурăннине йăлтах пĕлет вăл. Эп каларăм ăна, Настаçа илсе килетĕп, терĕм. Килĕшрĕ вăл... Айта, Настаç. Чĕрӳ манран сивĕнмен пулсан — пĕрле пурăнăпăр.

**Настаç.** Кай кунтан! Кай!

**Энти.** Настаç, эс пĕтĕмпех тăнран тухнă иккен кунта пурăнса. Настаç, савнă чĕкеçĕм, мĕн тытса тăрать сана çак кил-çуртра? Айта часрах!..

**Настаç.** Çылăх!..

**Энти.** Ху çине ху алă хуни çылăх мар тетним? Мĕншĕн çăлăнăç пур чухне хăвăн çамрак пуçна пĕтересшĕн эсĕ? Ирĕксĕр арăм туса хуни пĕтĕм пурăнăçна пĕтерчĕ пуль тетни? Эль эс мана нихçан та юратман-и?

**Настаç.** Çук... çук, Энти... Эп сана çав тери хытă юратнă... (*Энти кăкри çине ӳксе макăрать.*)

**Энти.** Настаç, чунăм, тарар çынсем сисиччен.

**Настаç.** Хăрушă! (*Карташĕнче сасăсем илтĕнеççĕ.*)

**Энти.** Килеççĕ. Айта! (*Настаç туртăнать. Энти ăна тытса ирĕксĕр илсе каясшăн, Настаç тĕртсе ярать.*)

**Настаç.** Кай! Эсĕ те ирĕксĕр илсе каясшăн-и мана?

**Энти** (*чӳрече патне пырса*). Чăн, сана кунта ирĕксĕр илсе килнĕ. Ирĕклĕн парса та ярас çук вĕсем. Пырассу килмесен — юл эппин çав кашкăрсем патне. (*Чӳречерен сикет.*)

**Настаç.** Энти! (*Чӳрече умне чупса пычĕ.*)

Энти!.. Пыратăп! (*Энти каялла чӳрече умне пырать, Настаç унăн алли çине сикет. Иккĕшĕ те çухалаççĕ.*)

ЧАРШАВ.

## Иккĕмĕш картина

Урам. Униçĕм пӳрчĕн умĕ. Хĕвел тухса пайтах хăпарнă. Пӳрт умĕнче каска. Çил хапхаран Настаçпа Энти Униçĕме çавăтса тухаççĕ, каска çине лартаççĕ.

**Униçĕм.** И-и, хĕвел ăçтах хăпарнă паян! Ытла та нумай çывăрнă-çке эпĕ. Энти, сана та ĕçе кайма вăхăт мар-ши ĕнтĕ?

**Настаç.** Кайма тăнăччĕ те-ха вăл, эп чартăм. Сана уçă сывлăша илсе тухас терĕмĕр.

**Униçĕм.** Тавах, ачамсем, тавах. Турă телей патăр сире, мана пăрахманшăн. Шĕкĕрех пурăнма пуçлăпăр-ха, турă хушсан. Энтипе Упа сывă чух, эпир те выçă вилес çук.

**Настаç.** Халь аптрамастпăр ĕнтĕ...

**Энти.** Ман шутпа, ĕçсем аван каймалла пек-ха...

**Униçĕм.** Çапла пултăр çав, ачам. Упа вăл лайăх пултараканччĕ-ха тимĕрçĕ ĕçне: çамрăк чух нумай ĕçлерĕ тимĕрçĕре. Эх, вăйччĕ унăн! Лаша таканне тытатчĕ те латăрт хуçса пăрахатчĕ.

**Энти.** Мĕншĕн-ха вăл тимĕрçĕ ĕçне пăрахса улăха хуралçа кайнă?

**Униçĕм.** Ун чухне пирĕн ялта пысăк мыскара пулса иртрĕ.

**Настаç.** Мĕнле мыскара вăл, атте, каласа пар-ха пире?

**Уніçĕм** (*йĕри-тавра пăхса*). Çынсем çук-и? Ĕç çапла пулчĕ. Упапа пĕрле тимĕрçĕре Хусан вырăсĕ ĕçлесе пурăнатчĕ. Пĕр çулхине выçлăх çул пулчĕ. Этемсем куланайсене парса татаймарĕç. Вулăсран тӳресем килсе тăпăлтарма пуçларĕç. Пĕринне юлашки пăруне илсе тухаççĕ, тепĕринне—тӳшекне, минтерне. Нимĕн те çуккисене Киштек улпучĕ патне ĕçлеме хăваласа кайрĕç. Халăх тарăхса çитрĕ. Çав тимĕрçĕпе Упа халăха тӳресене хирĕç тăратса вĕсене ялтан тивертсе кăларса ячĕç. Кайран вара салтаксем килчĕç те, темĕн чухлĕ çынна пĕтерчĕç. Тимĕрçе сăнчăрласа Çĕпĕре ячĕç. Упа пытанса хăтăлса юлчĕ. Çавăн хыççăн вара вăл улăхра хуралçă пулса пурăнма пуçларĕ.

**Энти**. Апла пулнă иккен. Хăй ун çинчен пĕр сăмах та каламасть тата.

**Уніçĕм**. Юрамасть, ачам, ун çинчен калаçма. Эсир те чĕлхĕрсене çыртса тăрăр.

**Энти**. Мĕне кирлĕ пире ун çинчен калаçса çӳреме?

**Настаç**. Чăнах çав, ухмах мар вĕт эпир.

**Уніçĕм**. Ытлашши вĕçерсе янă пĕр сăмахшăн та пуçа çухатма пулать ку саманара.

**Энти**. Ăна лайăх ăнланатпăр халь... Настаç, аçăна лайăх асту. Эп каям-ха ĕнтĕ. (*Каять.*)

**Уніçĕм**. Аван ача Энти.

**Настаç** (*савăнса ашшĕ çумне çыпçăнать*). Вăл çавтери ырă кăмăллă çын.

**Уніçĕм**. Ун ашшĕ-амăшĕ те лайăх çынсемччĕ. Анчах, нуши пĕтерчĕ вĕсене, вăхăтсăр вил-

чĕç. Э-э, сахал-и тĕнчере ун пек ахалех пĕтекен этемсем... Çапла ĕнтĕ вăл—тĕнче. Тĕнче тункатине кăларса ывăтса çĕнĕ йывăç лартса ÿстерсен, пурсăмăр та çăмăллăн сывласа ярăттăмăр та...

**Настаç.** Ав, урампа Çумккасем килеççĕ.

**Унисĕм.** Çумккасем? Айта пÿрте, Настаç. Вĕсене курсан, алă-ура чĕтĕрет. (*Кĕреççĕ, Çумккапа Квас Хветĕрĕ иртеççĕ.*)

**Çумкка.** Вĕсен умĕнчен иртнĕ чухне çÿç-пуç вирелле тăрать, тĕпсакайĕнче пичĕкепе тар ларнă пек туйăнать.

**Хветĕр.** Çав тар пички çурăлса пире сирпĕтсе яриччен, эпир хамăр вĕсене сирпĕтмелле. Çавсен хурри пулăпăр-и вара? Настаçне шыва кĕртме пуçласан, лешсем хăйсемех чупса килеççĕ вĕсем. Çапăçу пуласси паллах. Кайран пĕлĕпĕр унта мĕн тумаллине. (*Каяççĕ. Урампа тăват-пилĕк çамрăк пĕр-пĕрне шывпа сапса иртсе каяççĕ. Сасăсем: „Еля, асту, асту, сана хыçалтан шывпа сапаççĕ!“ „Ах!“ „Ха-ха-ха!“.*)

**Настаç** (*чÿречерен курăнса*). Атте, пăх-ха, епле шыв сапмалла выляççĕ.

**Унисĕм** (*пуçĕ чÿречерен курăнать*). Ваттисен йăли çапла, шыв сапмалла вылясан çумăр пулать, теççĕ. Çумăр çуманни нумай пулать ĕнтĕ. Ав, паранкă аврисем те лаштăрах пиçсе кайрĕç. (*Пĕри чупса пырса Унисĕм чÿречинчен шывпа сапса хăварать.*) Ах, мошенник!..

**Настаç.** Эпĕ те тухам-и, атте, шыв йăтса?

**Унисĕм.** Ан асăн та, Настаç. Тарнă арăмсене,

урама тухсан, шыва кӳртсе ӑнтан яраççӗ. Çапла, ӗлӗк Лаврентейӑн тарса килнӗ хӗрне шывпа сапса пӗтӗмпех чирлеттерчӗç, нумай пурнаймарӗ вара, асапа кайса вилчӗ çавӑн хыççӑн.

**Арӑм** (*чӳрече умне пырса*). Настаç, Настаç, сыхлан. Çумккасем халӑх хушшинче çумӑр çукки санран килет тесе сӑмах сарса çӳреççӗ. Сана шыва кӳртесшӗн!

**Настаç**. Ах, турӑ!..

**Унисӗм** (*арӑма*). Кай-ха, тархасшӑн, тимӗрçӗ лаççине кайса пӗлтер Энтипе Упана.

**Настаç**. Эп хамах чупам-ха луччӗ.

**Арӑм**. Э-эй, ан шухӑшла та, Настаç, темӗн курӑн! Хамах чупам, урасене сутӑн илмен. (*Васкаса чупать. Халӑх шавӗ илтӗнет. Настаç чӳречине хупать.*)

**Сасӑсем:** „Шыва кӳртес ӑна!“ „Кӑннана кайса ывӑтас!“ „Ахтапана юхса кайтӑр!“ „Ял намӑсӗ!“ „Ял нуши!“ (*Кӗпӗрленсе чупса пыраççӗ. Малта Çумккапа Квас Хветӗрӗ.*)

**1-мӗш.** Эй, килте пур-и?

**2-мӗш**. Унисӗм, хӑваласа кӑлар Настаçа, ату пӳртне çапса салататпӑр!

**1-мӗш**. Эй, çара çерçи, тух луччӗ кунта!

**2-мӗш**. Сас-чӗвӗ çук, килте çук пулӗ!

**Çумкка** (*ӑнсӑртран иртсе кайнӑ пек пырса кӗрет*). Килте пулмасан, ӑçта пулмалла!

**Карташӗнчи сасӑсем.** Питӗрӗнсе ларнӑ, алӑкне шалтан питӗрнӗ!

**Çумкка.** Мӗн пӑхса тӑмалла, кӗрсе сӗтӗрсе тухас çав вӑрӑм çӳçе!

**Сасăсем:** Алăкне уçмаççĕ!

**Çумкка.** Чӳречине çапса çĕмĕрĕр!!.

Чӳречине çапса салатаççĕ. Çумкка тата пĕр çамрăк чӳречерен кĕреççĕ. Пӳртре „ах!" тени, урамра: „А, лекрĕ-и? Çаклăнчĕ-и арçури?! Тавай, тавай кунта!"—тенĕ сасăсем илтĕнеççĕ.

**Çумкка** (*Настаçа чӳречерен тĕксе кăларать*). Тытăр ăна! (*Хăйсем те чӳречерен калла тухаççĕ.*)

**Сасăсем:**—Аля-ля!

— Шыва, Кăнна шывне ярас ăна!

— Ахтапана юхса кайтăр!

— Çавăн пирки çумăр çук!

Настаçа сĕтĕрсе илсе каяççĕ. Унисĕм чӳречерен карăнса кăшкăрать, чышкисене çӳлелле çĕклет.

**Унисĕм** (*ухмахланнă пек*). Халăх! Халăх! Турăран хăрăр, мĕн хăтланатăр эсир?! Мĕн турĕ вăл сире?!.

Халăх, Настаçа сĕтĕркелесе, сцена çинчен тухса каять. Кăшт тăрсан çӳçне-пуçне тустарса, аллисене çӳлелле çĕклесе Унисĕм тухать.

**Унисĕм** (*Настаçа илсе кайнă еннелле хальйăванса каяс пек утса*). Халăх!.. Эй!.. Мĕн хăтланатăр!.. (*Сасартăк Настаç хаяррăн çухăрса яни илтĕнет.*) Ах!.. (*Унисĕм тăсăлса кайса ӳкет те, чĕри çурăлнипе вилсе каять. Сцена çине Упасене чĕнме кайнă хĕрарăм чупса кĕрет те, Унисĕм умне чĕркуçленсе ларать.*)

**Хĕрарăм** (*ура çине тăрса çухăрса ярать*). Эй, халăх!. Мĕн турăр эсир? Унисĕм вилнĕ

вĕт! Упа-а! Энти-и!.. (*Чупса тухса каять. Кăшт тăрсан Упапа Энти халран кайнă Настаçа çавăтса кĕреççĕ.*)

**Настаç** (*ашшĕ вилнине курса ун çине тă-сăлса ÿкет те, хытă макăрса ярать.*) Ах, атте!..

Упапа Энти ним чĕнмесĕр пăхса тăраççĕ.

ЧАРШАВ.

**Редактор А. Кӑлган.**

Подписано к печати 13/I—41 г. НТ 2286 Зак. № 849.
Тир. 3000 экз. Формат бум. 60 × 92 1/32
Объем 1,5 п. л. авт. листов 1,5.

г. Чебоксары, тип. № 1 Управления издательств
и полиграфии ЧАССР.

Цена 1 р. 50 коп.

ТИХОН ПЕДЕРКИ

МЕЧТА

на чувашском языке

ГОСИЗДАТ ЧАССР